Иванов К.В. Вăранăр, тапранăр! : [сăвă]; Пăртта ачипчи: [калав]; Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юрă] / К.В. Иванов // Революцичченхи чăваш литератури. – Шупашкар, 1988. – С. 270-275.

# КОНСТАНТИН ИВАНОВ

(1890—1915)

Константин Васильевич Иванов 1890 çулхи майăн 27-мĕшĕнче Епхӳ кепернин Пелепей уесĕнчи (халĕ Пушкăрт АССРĕн Пелепей районĕ) Слакпуçĕнче хресчен килйышĕнче çуралнă. Пуçламăш шкулăн виçĕ çулне тăван ялта, тепĕр çулне Кекенре вĕренет. 1902 çулта та Пелепейри хула шкулне кайса кĕрет. Çулталăкран Чĕмпĕрти чăваш шкулне каять. Революци юхăмне хутшăннăшăн ăна 1907 çулхи март уйăхĕнче ытти ачасемпе пĕрле шкултан кăларса яраççĕ. Иванов вĕренме керес ĕмĕтпе тĕрлĕ çĕре çитсе пăхать, анчах ниçта та кĕреймест.

1907 çулхи кĕркунне ăна И. Я. Яковлев Чĕмпĕре куçару ĕçĕпе ĕçлеме чĕнсе илет. 1909 çулта поэт хулари гимназире учитель ятне илме экстерн йĕркипе экзамен тытать. 1909—1910 çулсенчи хĕле тăван ялта ирттерет. 1910 çулхи кĕркунне каллех Чĕмпĕре таврăнать те Чăваш шкулĕ çумĕнчи хĕрачасен икĕ класлă училищинче чистописанипе рисовани учителĕнче ĕçлеме тытăнать. Поэт шкулти вĕренӳ кĕнекисене кăларас ĕçе те хутшăнать. 1914 çулта ӳпке чирĕпе тата хырăм катарĕпе хытă чирлесе ӳкет те Чĕмпĕртен тăван яла каять. Вăл 1915 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче вилнĕ.

Литература ĕçне Иванов 1906 çулта хастарлă хутшăнма тытăнать. «Нарспи» поэмăна, «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм», «Икĕ хĕр» юмахсене, «Шуйттан чури» трагедие, «Выçăпа аптранăскерсем», «Хальхи самана» тата ытти сăвăсене 1907—1908 çулсенче çырнă. Революци юррисемпе пĕрлех вăл М. Ю. Лермонтов, А. В. Кольцов, Н. А. Некрасов, Н. М. Огарев сăввисене куçарнă. Поэт И. В. Гетен «Рейнеке-Лис» поэмине те куçарнă, алçырăвĕ çунса кайнă.

«Нарспи» поэмăпа виçĕ юмахĕ 1908 çулта «Чăваш халăх халапĕсем» кĕнекере тухнă. М. Ю. Лермонтовран куçарнисем çав çулах «Калашник хуçа çинчен хунă юрă» кĕнекере пичетленнĕ.

Иванов художник ĕçне те кăмăлланă, букварь валли ӳкерчĕксем хатĕрленĕ, уйрăм картинăсем тунă. Поэт фольклор материалĕ те чылай пухнă.

## Вăранăр, тапранăр!

[Вырăс юррисем тăрăх]

Хура халăха ирĕке янă
Нарсăн вунтăххăрмĕш кунĕнче[1],
Анчах çĕр халăха пулаймарĕ, —
Ак сире улпутсен ырлăхĕ.
  Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
  Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
  Халăх хăй çиллине кăтартăр![2]
  Малалла, малалла, малалла!
Хресченсем çĕрсĕр пит аптăраççĕ,
Улпутсем — уншăн питĕ хавас;
Пĕр çĕрсĕр хресченсене тытаççĕ
Йӳн хака хăй ĕçне ĕçлеме.

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтăртăр!
Малалла, малалла, малалла!

1906, октябрь

## Пăртта ачипчи

### Кашкăрсем

Пирĕн ратне ашшĕ Кашкăр пулнă. Вăл тĕне кĕмен чă ваш. Унăн икĕ ывăл юлни паллă: пĕри Кашкăр Иванĕ, тепри Кашкăр Куçми. Иванин йăхĕнчен юлнисене «Пăртта ачипчи» теççĕ. Куçминне — «Куçма ачипчи».

Кашкăр хăй ăçтан килнине те пит аванах пелекен çук. Ваттисем Пелепейрен, вырăссем килсе тухсан, саланнă теççĕ. Ĕлĕк пирĕн ял вырăнĕнче вăрман анчах пулнă, унта кашкăрсем пит нумай çӳрене. Пирĕн асатте те хамăр ял тĕлти вăрмана килсе ларнă та кашкăр тытса пураннă. Çавăнпа ăна Кашкăр тенĕ, теççĕ.

Кашкăр хăй мĕнле вилни те паллă мар. Ун ывăлĕ Куçминчен юлнă йăх Пăрттасем пекех нумай, усал, çмил мар. Мĕншĕн вăл апла? Кашкăр Иванĕн арăмĕ Пăртта пулнă. Пăртта пек хастар арăм ялта пулман. Пĕтĕм яла вăл хăй аллинче тытнă. Пурте ун умĕнче чĕтресе тăнă. Хуть кама та кастарас тесен кастарнă, кастармасан илсе кĕрсе ĕçтерет-çитерет те кăларать те ярать. Унăн пилĕк ывăл пулнă: Ванюшке, Çтаппан, Симун, Пĕрче, Хветут. Юлашки ывăлĕ Хветучĕ тимĕрçĕрен пулнăскер... Хветут Вăрăм Ухтерене* сăра ĕçме чĕнме каять. «Пăртта патне пăртлаттарса, Ванюшке патне вашлаттарса, Симун патне сиктерсе».

Вăрăм Ухтерен калать: «Ачам-ача-а-ам! Эсĕ тимĕрçĕ ывăлĕ иккен!»

Пăртта ывăлĕсене те питех ирĕк паман, çилли килсен çаптарнă, çилĕ çук чух темтепĕр илсе çитернĕ, ачашланă. Çапла пулнă вăл Пăртта карчăк. Çавăнпа унăн йăхĕ те çавăн пекех пулнă: хастар, çмил, усал, ырă.

Манăн тӳрĕ асаттесем ак çаксем: Кашкăртан — Кашкăр Иванĕ, Кашкăр Иванĕнчен — Симун, Симунтан —

---

Вăрăм Ухтерен пуян старик пулнă. Вăл Хушăлкасен çĕрне илсе пуяннă. Халь те пулсан Хушăлка çĕрĕнче Ухтерен çăлĕ текен çал пур. *Автор асăрх.)*

Никулай писӗр, Никулай писӗртен Ваçинка пуян, Ваçинкаран — эпӗ, Кӗçтук.

Тепӗр паллӑ: Кашкӑр Иван ывӑлин Ванюшкен ывӑлӗ Никандр пулнӑ. Вӑл халь те пурӑнать. Вӑл — эрех çӑварӗ. Нумай та пулмасть-ха ак вӑл хӑйне фотографияра ӳкерттернӗ: хӑй ларать, çумӗнче кулаç, аллинче эрехлӗ кӗленче. Çапла çын Пӑртта асаннен ачипчи. Кашкӑр ратни халӗ çур яла яхӑн пур. Унтан кӗçӗнрех ратне ялта — Хураç.

### Пӑртта карчӑк

Хӗлле Ванюшкен салтака каймалла пулнӑ. Салтака пама Ёпхӗве каймалла пулнӑ. Ванюшкене ӑсатма ашшӗпе амӑшӗ кайнӑ. Ванюшке ун чухне вунсакӑр çулта пулнӑ. Ун, шухӑскерӗн, салтака каясси килмен пит. Ахаль те ун чух вӑрçӑ пуçланать тие пуçланӑ. Вӑрçӑ хӑрушӑ япала.

Кӗсем Ёпхӳве çитнӗ те пӗр хӑна килне кӗнӗ. Хӑна килӗ вырӑссем — пӗлӗшсем пулнӑ. Пӑхӑсӑн, Ванюшкене илчӗç. Ку пӗлӗшсем Пӑрттана Ванюшкешӗн ашшӗ кайтӑр тие пуçланӑ. Пӑртта Ивана ярасшӑн мар: ватӑ вӑл, вӑйӗ çук, килте ман ывӑлсем тата та нумай-ха, Ванюшкесӗр пуçне те, тенӗ. Ыран каяс тенӗ чухне хайхи пӗлӗшсем Ванюшкене кантӑр çурӑмӗсем айне пытарнӑ та хунӑ. Тепӗр кун шыраççӗ-шыраççӗ — Ванюшке çук. Вара Пӑртта стариккине панӑ та янӑ. Ашшӗне илсе кайсан, Ванюшке тухнӑ кантӑр айӗнчен. Киле таврӑннӑ чух Пӑртта хӗне-хӗне таврӑннӑ ӑна. «Эс пӗтертӗн аçӑна, эс пӗтертӗн, ак сана, ак сана!» Иван старике вӑрçах илсе кайнӑ. Вӑл вара, вӑйсӑрскер, çул çинчех пӗтнӗ. Ванюшкене савӑнӑç!

Çапла пулнӑ пирӗн Пӑртта асанне. Халь те пулсан Пӑртта ачи-пӑчисем вӑйӑа тухсан парӑн-парӑн сикнӗ чух: «Пӑртта патне пӑртлаттарса, Ванюшке патне вашлаттарса, Симун патне сиктерсе», — тесе такмакласа сикеççӗ.

1906, август

## Иван ёмпӳпе çамрӑк сыхлавçӑ тата саттур Калашник хуçа çинчен хунӑ юрӑ

### Юрӑ умӗнчен каланӑ сӑмах

Пӗр виççӗр аллӑ çул ӗлӗк вырӑс патшалӑхне Иван Грозный ятлӑ патша тытса тӑнӑ. Вӑл хӑй пурнӑçӗнче патшалӑха нумай усӑ кӳнӗ: Хусана, Аçтӑрхана, Çӗпӗре вӑрçса илсе, хӑй патшалӑхне аслӑлатса сарса янӑ, ытти енчен те

вăл патшалăхне усă нумай тунă. Çавăнпа вăл халăх хушшинче хăйне асăнмалăх ят хăварнă. Çапах та унăн ырă ĕçĕсемпе пĕрле хаяр ĕçĕсем те нумай пулнă, çавăнпа ăна Грозный (Хаяр) патша тесе ят панă.

Иван ĕмпӳ ашшĕнчен виçĕ çулта, амăшĕнчен сакăр çулта тăрса юлнă. Вăл ытла çамрăкран патшалăха малтан улпутсем тытса тăмалла пулнă, тăлăх патшана та вĕсемех пăхса ӳстермелле пулнă. Анчах улпутсем хушшинче пĕртте килĕшӳ пулман: пурин те пĕр-пĕринчен аслăрах пуласси килнĕ, пĕри те пĕр-пĕрне пăхăнасшăн пулман. Вĕсен хушшинче яланах вăрçу-тавлашу татăлман, пĕр-пĕрин çинчен элекленĕ, пĕр-пĕрне тĕрмене хуптарнă, вĕлерттернĕ. Çав ĕçсем час-часах патша уменчех пулнă.

Улпутсем çамрăк патшаран вăтанман, ăна нимĕн вырăнне те хуман, начар тумлантарнă, апачĕ те унăн пит начар пулнă. Патша йăлăннине, хушнине пăхмасăр, хăш-хăш чухне çав улпутсем куçĕ умĕнчех вăл юратнă çынсене тытса кайса вĕлерттернĕ; çитменнине, ăна хăйне те ирĕк паман, нимĕн те вăл хăй ирĕкĕпе тăвайман. Çапла улпутсем хăйсемшĕн анчах тăрăшса пурăннă. Çамрăк ачана чипертерех пăхса ӳстерес вырăнне, вĕсем çамрăкранпах унăн кăмăлне пăсса янă. Никам та ăна ырра вĕрентекенни пулман, никамран та вăл ăшă сăмах илтмен. Иван питĕ çемçе кăмăллă ача пулнă, çавăнпа улпутсем çапла кӳрентернисем пурте унăн чĕри тĕпне кĕрсе юлнă.

Иван хастарлă, ăслă ача пулнă, анчах унăн ăсĕ чипертерех пăхса ӳстерменрен пăсăлса, хавшакланса кайнă. Иван ашшĕ-амăшĕнчен ытла çамрăкла тăрса юлнă, вăл хăйне пăхман, хисеплемен çынсем хушшинче ӳснĕ; çавăнпа вăл хăй те вĕсенчен ютшăннă, хăй тавраш ĕнчи çынсене сăнаса çӳреме пуçланă, кайран вăл, вĕсене шанмасăр, вĕсенчен шикленекен те пулнă. Мĕн кĕçĕнрен унăн куçĕ умĕнче ирсĕр ĕçсем пулнă, хăйне те пит кӳрентернĕ, çавăнпа вăл ӳснĕçем çиллесленсе пынă. Юлашкинчен вăл хăй ăшĕнче çынсене темĕн тĕрлĕ курайми пулса çитнĕ. Çапла çынсене курайми пулса çитсе вăл патшана ларсан, хăй тăшманĕсене питĕ хытă тавăра пуçланă.

Пĕрре патша вăрçăран тавăрнсан тар чирĕпе чирлесе вилес пек выртнă. Патша хăй те, улпучĕсем те чĕрĕлессе ĕмĕтленмен, пурте вилет пулĕ тенĕ. Çавăнпа патша улпучĕсене пуçтарнă та, хăйĕн çамрăк ывăлне патшана лартса, улпучĕсене хĕрес чуптутарасшăн пулнă. Патша выртакан пӳлĕмпе юнашар тепĕр пӳлĕмре улпутсем кăшкăрашма тытăннă: хăшĕ хĕрес чуптăвас тенĕ, хăшĕ чирлĕ патша çинчен темĕн те пĕр вăрçса калаçнă, ывăлне патшана

кӳртес мар, Иван хӑй ҫамрӑк чухне тертленни те ҫитӗ, патшана урӑх ҫынна суйлас тенӗ. Чирлӗ патша ҫавна пурне те илтсе выртнӑ. Ҫавӑнтан кайран чирӗнчен чӗрӗлсен, Иван ӗлӗкхинчен те ытла хаярланса ҫитнӗ, улпучӗсене темӗн тӗрлӗ хӗсӗрлеме тытӑннӑ.

Юлашкинчен вӑл никама та шанми пулса ҫитнӗ, хӑйне вӗлересрен те пит хӑра пуҫланӑ. Вара вӑл, юрлӑрах улпутсен ывӑлӗсене суйласа илсе, вӗсене турӑ умӗнче тупа тутарса, хӑйне сыхлама пӗр евӗрлӗ ҫар ушкӑнӗ тунӑ. Вӑл вӗсене хуласем, ҫӗрсем валеҫсе панӑ. Мускаври хӑш-хӑш урамсене юри вӗсем валли уйӑрса панӑ. Ҫав ҫар ушкӑнне, вӗсене валеҫсе панӑ хуласене, ҫӗрсене пурне те пӗрле опричнина тенӗ. Чӑвашла вӑл *уйрӑм уйӑрса хуни* тени пулать. Ҫав ҫар ушкӑнне тепӗр тӗрлӗ *сыхлавҫӑсенӗн ушкӑнӗ* теме юрать, мӗншӗн тесен вӗсем пур ҫӗрте те патшана тӑшман тапӑнасран сыхласа ҫӳренӗ, вӗсем патшана сыхлакан ҫынсем пулнӑ.

Сыхлавҫӑсем патшаран анчах хӑранӑ, вӗсем: «Эпир патшана сыхлатпӑр, ӑна хирӗҫ тӑракансене пурне те йытӑ пек туласа тӑкатпӑр, шӑпӑрпа шӑлнӑ пек Вырӑс ҫӗрӗнчен хӑваласа кӑларатпӑр», — тесе, йӗнерӗсен ҫумне пӗр енне йытӑ пуҫӗ, тепӗр енне шӑпӑр ҫакса юланутпа ҫӳренӗ. Патша вӗсене ытла ирӗк янӑран вӗсем ним тума та хӑраман: айӑпсӑр ҫыннах, хӑйсен кӑмӑлне килмесен, вӗлернӗ: мулне туртса илесшӗнех, айӑп туса, пуянтарах ҫынна тытса кайнӑ; хӑш-хӑш чухне ҫын арӑмне, ҫын хӗрне те пусмӑрласа кайнӑ; ытти ҫавӑн пек ирсӗр ӗҫсем те нумай тунӑ. Сыхлавҫӑсем урампа иртсе ҫӳренӗ чухне ҫынсем урама тухма мар, чӳречерен пӑхма та хӑраса ларнӑ, урамра пӗр чӗрӗ ҫын та курайман.

Иван вӗсене хӑй ҫумӗнче тытнӑ, тумлантарнӑ, пӑхнӑ, вӗсемпе пӗрле сунара ҫӳренӗ, праҫник кунӗсенче хӑй те. сыхлавҫисем те, монахла тумланса, чиркӗве кӗлле кайнӑ. хӗлле Мускав шывӗ ҫине паттӑрсем кӗрешнине курма ҫӳренӗ. Патша вӗсемпе час-часах ӗҫкӗ-ҫикӗ тунӑ, сыхлавҫисемпе ӗҫсе-ҫисе вӑхӑт ирттернӗ.

Ҫак юрӑри Кирипей ачи те ҫав сыхлавҫӑ ушкӑнӗнчен пӗри пулнӑ. Вӑл саттур ҫын, унӑн пурӑнӑҫӗ — саттурлӑх унсӑр пуҫне вӑл пурӑнаймасть. Унӑн чӗринче хуйхӑ пур вӑл Калашник хуҫан ҫамрӑк арӑмне юратать. Ҫав хуйхӑпа унӑн чӗри ҫурӑлать. Анчах ҫав чӗре аскӑнса, пӑсӑлса пӗтнӗ, ҫав вут пек вӗри чӗре намӑс мӗнне пӗлмест: мӗн тӑвас килнӗ, мӗн ыйтнӑ, пурне те пар ӑна. Патша ӑн юратать, патша ӑна ирӗк ҫӳретет. Вӑл нимӗнрен те, никамран та хӑрамасть, унӑн чарӑнас йӑла ҫук. Йӑли ҫу

пирки вăл Калашник арăмне çын умĕнче мăшкăла хăварать.

Мускав шывĕ çинче, пăр çинче, паттăрсем кĕрмешӳ тунă вăхăтра, Кирипей ачине хирĕç, арăмин мăшкăлĕшĕн таварма, сыхлавçăпа вилмеллех çапăçма Калашник хуçа тухать. Вăл ахаль чух йăваш, тӳрĕ çын, пурнăçĕ лăпкă чухне вăл хăй те лăпкă çын; анчах халĕ, арăмĕ мăшкăл курса чунĕ витнĕскер, вăл кĕрлесе тăракан тинĕс пек.

Çил-тăвăл çук чух тинĕс лăпкă тăрать, унăн кĕленче пек кăкăрĕ хускалмасть те, çынсем пĕр хăрамасăр кемисемпе* ишсе çӳреççĕ, çутă хĕвел те çӳлтен выляса пăхать. Анчах акă кутсăр-пуçсăр çил-тăвăл килсе тухать те, тинĕс пĕтĕм кăкăрĕпе чĕтресе, çĕкленсе каять, шавласа кĕрлесе ярать, тăвĕ-тăвĕпе хумсем шăваççĕ, кимĕ те, çын та шыва путать, хĕвел те хăраса тахçанах пĕлĕтсен айне тарса кĕнĕ. Калашник хуçа çавăн пек çын пулнă.

Çав Иван ёмпӳ, çав Кирипей сыхлавçă, çав Калашник хуçа çинчен çак юрра хунă.

1907

* Кимĕсемпе.